22-мӗш çул тухать, Хакӗ 15 пус.

1942
ДЕКАБРЬ
8
ЫТЛАРИКУН
284 (6219) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

Совет Информаци Бюровӗнчен

Декабрӗн 6-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Декабрӗн 6-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем Сталинград районӗнче тата Центральнӑй фронтра малтанхи еннеллех наступлени туса пынӑ.

Иртнӗ эрнере, ноябрӗн 29-мӗшӗпе декабрӗн 5-мӗшӗ хушшинче, сывлӑшри çапӑçусенче, аэродромсенче тата зенитнӑй артиллери пенипе нимӗçсен 192 самолетне, çав шутра виçӗ моторлӑ 108 транспортнӑй самолетне, пӗтерсе тӑкнӑ. Çав вӑхӑт хушшинче пирӗн 102 самолет пӗтнӗ.

* * *

Сталинградӑн заводсем вырнаçнӑ районӗнче пирӗн войскӑсем противникпа хирӗç-хирӗç персе тӑнӑ. Совет артиллерисчӗсем нимӗçсен 4 дзотне тата 7 блиндажне пӗтерсе тӑкнӑ, артиллерин 3 батарейине тата минометсен 6 батарейине пусарса лартнӑ. Хулан кӑнтӑр хӗрринче пирӗн чаçсем çапӑçса пырса разведка тунӑ тата нимӗç салтакӗсемпе офицерӗсене пӗр рота таран пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинградран çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре, Дон шывӗн сулахай хӗрринче, пирӗн войскӑсем наступленилле çапӑçусем туса пынӑ тата противникӑн хаяр контратакисене сире-сире янӑ. Н-ски соединенин боецӗсем кункаçа 800 нимӗç салтакӗпе офицерне çити пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗçсен 18 танкне персе çӗмӗрнӗ е çунтарса янӑ. Тепӗр участокра противник пехотӑн пӗр полк таран вӑйӗпе тата артиллерипе танксем пулӑшса пынипе пирӗн позицисене атакӑланӑ. Совет боецӗсем вӑл атакӑна сирсе янӑ, нимӗçсене пысӑк çухатусем тӳстернӗ. Çапӑçу хирӗнче тӑшманӑн 300 вилли таран выртса юлнӑ. Нимӗçсен 3 танкне персе çӗмӗрнӗ, 10 автомашинине тата орудине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинградран кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн войскӑсем противникӑн йышлӑ вӑйӗсен контратакисене сире-сире янӑ, уйрӑм участоксенче малалла куçса пынӑ. Пӗр участокра нимӗçсем çапӑçӑва пехотӑн пӗр полкне тата танксене кӗртсе янӑ. Пирӗн чаçсем противника пысӑк çухатусем тӳстернӗ. Çапӑçу хирӗнче тӑшманӑн темиçе çӗр вилли тата персе çӗмӗрнӗ е çунтарса янӑ 40 танкне çити выртса юлнӑ.

* * *

Центральнӑй фронтра пирӗн войскӑсем, противник вӑйлӑн хирӗç тӑнине сирсе пырса, малалла наступлени туса пынӑ. Великие Луки районӗнче совет чаçӗсем халӑх пурӑнакан темиçе пункта йышӑнса илнӗ, нимӗçсенчен 12 оруди тата пулеметсем, винтовкӑсем, автоматсем нумай тытса илнӗ.

Ржевран хӗвеланӑçнерехре Добровольский юлташ ертсе пыракан часть тӑшманӑн 20 контратакине сирсе янӑ. Çав çапӑçура гитлеровецсем пысӑк çухатусем тӳснӗ. Çапӑçу хирӗнче нимӗç салтакӗсемпе офицерӗсен 1.000 вилли ытла выртнине шутласа кӑларнӑ. Пирӗн боецсем опорнӑй пункт, 2 танк, 46 оруди, 72 пулемет, 6 миномет, 35 автомашина тата продовольстви, боеприпассем, фураж, инженерла пурлӑх хунӑ 5 склада тытса илнӗ. Пӑшалсемпе тата пулеметсемпе персе, нимӗçсен пӗр транспортнӑй самолетне ӳкернӗ.

* * *

Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑçнерехре Н-ски соединенин боецӗсем противника халӑх пурӑнакан икӗ пунктран хӑваласа кӑларнӑ. 49 автомашина, 3 вездеход, тӗрлӗ складсем 5, пӗр радиостанци тата 3 оруди тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Украинӑри районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗ ноябрӗн 10-мӗшӗпе 20-мӗшӗ хушшинче ӑнăçлӑ операцисем чылай туса ирттернӗ. Партизансем чугунçул çинчи 2 кӗпере сирпӗнтерсе янӑ, телефонпа телеграф линине 4,5 километр тӑршшӗ татса илнӗ, пӗр броневика тата 4 грузовой автомашинӑна пӗтерсе тӑкнӑ. Совет патриочӗсем противникпа çапӑçса 100 гитлеровеца ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Нимӗçсен фашистла ирсӗрӗсем Орел облаçӗнчи Наглински районра тискер ӗçсем тунӑ. Гитлеровецсем 18 яла тата 26 поселока çунтарса янӑ. Вӗсем колхозниксен 3.850 çуртне, колхозсен 114 хуралтине, 21 шкула, 5 больницӑна, 8 аптекӑна, 18 колхоз клубне çунтарса янӑ. Гитлерла вӑрӑ-хурахсем колхозниксене нимӗн хӑвармиччен çаратса тухнӑ, вӗсенчен выльӑх-чӗрлӗхне, тумтирӗсене, килти мӗнпур япалисене туртса илнӗ, мӗнпур тырра тата çӗрулмине пӗтӗмпех илсе кайнӑ. Наглински районри ялсенче фашистла бандитсем 187 колхозника тискеррӗн асаплантарса вӗлернӗ. Чӗрӗ юлнӑ стариксемпе хӗрарӑмсене тата ачасене выçлӑха тӑратса хӑварнӑ.

Декабрӗн 7-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳрен

Декабрӗн 7-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле Сталинград районӗнче тата Центральнӑй фронтра пирӗн войскӑсем малтанхи еннеллех наступлени туса пынӑ.

* * *

Сталинградӑн çурçӗр хӗрринче пирӗн разведка тӑвакан отрядсем тӑшманӑн 3 дзотне сирпӗнтерсе янӑ тата нимӗçсен 60 салтакӗпе офицерне çити пӗтерсе тӑкнӑ. Совет артиллерийӗ боеприпассен складне сирпӗнтернӗ тата противникӑн пӗр çӗре пухӑнса тӑнӑ пехотине сапаласа янӑ.

* * *

Сталинградран çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн войскӑсем противникӑн пур контратакисене те сирсе янӑ, хӑйсем йышӑнса тӑракан рубежсене тӗреклетнӗ тата разведка тунӑ. Çӗнӗрен палӑртнӑ тӑрӑх, ӗнер Н-ски соединенин боецӗсем нимӗçсен тата 800 салтакӗпе офицерне вӗлернӗ, 19 танкне персе çӗмӗрнӗ е çунтарса янӑ. Çапла ӗнтӗ кункаçа противникӑн 1.600 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ, 37 танкне персе çӗмӗрнӗ е çунтарса янӑ. Пирӗн разведка тӑвакан отрядсем çӗрле противникӑн позицийӗсем патне кӗрсе кайнӑ та нимӗçсен пехотине икӗ ротӑна çити пӗтерсе тӑкнӑ. Н-ски чаçӑн боецӗсем пехотӑн хӗçпӑшалӗпе персе нимӗçсен транспортнӑй самолетне ӳкернӗ.

* * *

Сталинградран кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн чаçсем уйрӑм участоксенче активлӑн кӗрешнӗ. Н-ски чаçӑн боецӗсем противника тӗреклетнӗ позицисенчен хӑваласа кӑларса 250 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. 5 оруди, 21 пулемет, 8 миномет тата радиостанци тытса илнӗ. Тепӗр участокра нимӗçсен танкӗсем пирӗн пӗр подразделение ытти сенчен татса илме хӑтланнӑ. Старши лейтенант Байдулин ертсе пыракан бронебойщиксем çывӑхран тӗл персе нимӗçсен 4 танкне персе çӗмӗрнӗ. Противникӑн ытти танкӗсем вара часах каялла çавӑрӑнса кайнӑ.

* * *

Центральнӑй фронтра пирӗн войскӑсем наступленилле çапӑçусем туса пынӑ. Ржев—Вязьма чугунçулӗ районӗнче виçӗ кун хушшинчи çапӑçусенче нимӗçсен 1000 салтакӗпе офицерне çити вӗлернӗ. Тӑшманӑн 21 танкне, бронемашинине, 30 орудине, 17 минометне, 150 пулеметне, 70 автомашинине тата тӗрлӗ пурлӑх усракан 4 складне пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ. Сывлӑшри çапӑçусенче тата пирӗн зенитнӑй артиллери нимӗçсен 15 самолетне персе ӳкернӗ, 7 самолетне сиенленӗ. Тепӗр участокра пирӗн войскӑсем, противник вӑйлӑн хирӗç тӑнине сирсе ярса, малалла куçнӑ та нимӗçсен оборона районӗнче шалта çапӑçнӑ.

* * *

Курск облаçӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗ пӗр уйӑх хушшинчи çапӑçусенче 450 нимӗç салтакӗпе офицерне вӗлернӗ, 13 пулемет тата 120 винтовка тытса илнӗ. Çав отрядри партизансен пӗр ушкӑнӗ противникӑн 4 поездне ӳпӗнтерсе янӑ. Крушенисене пула 3 паровоз тата 69 вагонпа платформа çӗмӗрӗлнӗ.

* * *

Сталинград районӗнче пирӗн боецсем нимӗçсен 371-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 670-мӗш полкӑн 3-мӗш ротинчи салтака Пауль Райсинга тыткӑна илнӗ. Çав салтакӑн урисене тата сылтӑм аллине тӑм илнӗ. Пауль Райсинг çапла каласа панӑ: «Пирӗн рота халиччен те хӗллехи тумтирсем илмен-ха. Фельдфебельсемпе унтер-офицерсем салтаксене тӑм илесрен мӗнле сыхланмалли çинчен кашни кунах калаççӗ. Пире атӑсене çӗтӗк-çатӑкпа чӗркеме, кунча тавра улӑм çыхма, хӑлхасене питшӑллипе çыхма сӗнетчӗç. Салтаксен шухӑш-кӑмӑлӗ питӗ пусӑрӑнчӑк. Вӗсем çапла калаççӗ: «Пӗлтӗрхи истори тепӗр хут пулса пырать. Эпир пурте сивӗпе шӑнса вилетпӗр», теççӗ. Салтаксене хавхалантарас тесе, пире нумаях пулмасть çапла пӗлтерчӗç: командовани «Хӗвелтухӑçӗнчи фронтра хӗллехи çапӑçусене хутшӑнса çапӑçнӑшӑн» медаль памалла тунӑ, терӗç. Халлӗхе алла медаль мар, лентине çеç параççӗ. Лентине халӗ пӗлтӗрхи хӗлле фронтра пулнисене параççӗ. Салтаксем медале «шӑнтнӑ какай орденӗ» тесе ят панӑ.

Хӗрлӗ Çар боецӗсем валли ӑшӑ тумтирсем

ЭЛЕК. (Хамӑр корр.). Юманкӑри колхозникӗсем Хӗрлӗ Çар боецӗсем валли ӑшӑ тумтирсем хатӗрлеççӗ. Çак кунсенче вӗсем 11 тир, 10 килограмм çӑм пӗр мӑшӑр çӑмата, 2 мӑшӑр алсиша, 8 çӗлӗк пухса панӑ.

Ялти политикӑллӑ çутӗç ыйтӑвӗсемпе пулнӑ Мускав облаçӗнчи канашлу

Декабрӗн 3-мӗшӗнче ялти политикӑллӑ çутӗç ыйтӑвӗсемпе облаçри канашлу пулса иртнӗ. Канашлӑва ВКП(б) Мускав область комитечӗ пухнӑ. Канашлура вулав çурчӗсен, библиотекӑсен заведующийӗсем, çутӗç отделӗсен работникӗсем, облаçри партипе комсомол организацийӗсен руководителӗсем пулнӑ. Канашлу ӗçне М. И. Калинин, партин Мускав область тата хула комитечӗсен секретарӗсем А. С. Щербаков, Черноусов, Попов юлташсем, ӗççынни депутачӗсен Мускав область совечӗн исполкомӗн председателӗ Тарасов юлташ, ЦК ВКП(б) пропагандӑпа агитаци управленийӗн начальникӗ Александров юлташ, академик Лысенко хутшӑннӑ.

Канашлура ялти политикӑллӑ çутӗç çинчен ВКП(б) Мускав комитечӗн пропаганда енӗпе ӗçлекен секретарӗ Поздеев юлташ доклад туса панӑ. Вӑл хӑйӗн докладӗнче массӑсем хушшинче ӗçлесси вӑрçӑ вӑхӑтӗнче питех те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине палӑртнӑ.

Прение тухса каланӑ канашлу участникӗсем хӑйсен опычӗсемпе паллаштарнӑ. Канашлу участникӗсем Т. Д. Лысенко академикӑн сӑмахне пысӑк тимлӗхпе итленӗ. Лысенко юлташ ялти интеллигенцие вулав çурчӗсем ӳрлӑ агротехникӑллӑ пропагандӑна татах та ытларах сарса пыма чӗннӗ.

М. И. Калинин тухса каланине канашлу уйрӑмах ӑшшӑн кӗтсе илнӗ.

— Эсир, — тенӗ М. И. Калинин канашлура пулнӑ юлташсене чӗнсе, — ялти интеллигенци пулса тӑратӑр, сирӗн ӗç вӑл чылай енӗпе культурӑллӑ ӗç пулса тӑрать. Избач урлӑ е вӑл пулӑшнипе, е тата вӑл хутшӑннипе, тӗрӗссипе илсен ялти обществӑллӑ ӗç хӗрсе пырать. Паллах, вӑл хресченсене нумайӑшне пама пултарать. Анчах та çакна тума çыннӑн хӑйӗн туртӑмӗ, халӗ тӗп лини пулса тӑракан паллӑ тӗллев патне туртӑнакан политикӑллӑ лини пулни кирлӗ. Тӗп ӗç хальхи вӑхӑтра вӑл — Хӗрлӗ Çара, государствӑна пулӑшасси пулса тӑрать. Апла пулсан ялти интеллигенцин — избачӑн, культурӑллӑ работникӑн, учителӗн пӗтӗм ӗçӗ çав енӗпе пулса пымалла.

М. И. Калинин вӑрçӑ питех те хаклаларни çинчен калать. Вӑрçӑ расхочӗсене витме государство нумай укçа-тенкӗ, налогсемшӗн пухнӑ укçа-тенкӗне те, çавӑн пекех ӗççыннисем хӑйсен ирӗкӗпе панӑ укçа-тенкӗне те нумай расходлать. Укçа-тенкӗ кӗрсе тӑрасси пӗр-пӗр районра ӑнлантаруллӑ ӗçе мӗнле йӗркеленинчен чылай килет. Ялти культура работникӗсем укçа-тенкӗ тата япалаллӑ лотерейисен билечӗсене сарас, эскадрильйӑсем, танксен колоннисем тума куçа-тенкӗ пухас, Хӗрлӗ Çар боецӗсем валли парнесем пухас ӗçре пысӑк пулӑшу пама пултараççӗ. Пропагандистпа агитаторӑн тӗрӗс та ӗненмелле сӑмахӗ çынсене патриотла ӗçсем тума хавхалантарать.

Большевиксен партийӗпе совет влаçӗ Хӗрлӗ Çара малалла çирӗплетсе пырас тӗллӗшпе тата нимӗç захватчикӗсене çапса аркатас, совет çӗрне çав ирсӗрсенчен тасатас ӗçе организацилес тӗллӗшпе туса ирттерекен мероприятисем çинчен колхозниксен чи анлӑ массисене куллен ӑнлантарса пыма кирли пирки М. И. Калинин уйрӑмах палӑртса каланӑ. М. И. Калинин хӑйӗн тӗп шухӑшне вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи практикӑран илнӗ чылай примерсемпе çирӗплетсе парать.

— Совет влаçӗ мӗн калани вӑл таса тӗрӗслӗх пулса тӑрать. Совет влаçӗ вӑрçӑн малтанхи кунӗсенчен пуçласах: нимӗç захватчикӗсем вӗсем — вӑрӑ-хурахсем, пусмӑрçӑсем, çынна курайманскерсем пулса тӑраççӗ, тесе каларӗ. Çакна ӑна пурте ӑнланса илчӗç, нумайӗшӗсем хӑйсен опычӗпе тата питех те хаклӑ хакпа ӑнланса илчӗç. Нимӗçсем оккупациленӗ районсенче выльӑх-чӗрлӗхсене, инвентарьсене, колхозсемпе колхозниксен мӗнпур пурлӑхӗсене туртса илеççӗ, вӗсенчен ирсӗррӗн мӑшкӑлаççӗ, çав вӑхӑтрах эвакуаци йӗркипе тӑван çӗршыва шалалла вӑхӑтра куçса кайнӑ колхозниксене совет влаçӗ пулӑшу пачӗ, вӗсем те хӑйсен вӑйӗпе пирӗн пӗрлӗхлӗ тӗрӗс ӗçе — ылханлӑ тӑшмана çапса аркатас ӗçе пулӑшаççӗ. Çакӑ тата ытти тӗрлӗ примерсемпе совет влаçӗн кӑтартӑвӗсемпе канашӗсене вӑхӑтра та тӗрӗс пурнӑçа кӗртменни мӗнле инкексем патне илсе çитерме пултарасси çинчен ӑнлантарса памалла.

Совет влаçӗн кӑтартӑвӗсем вӗçне çитиччен тӗрӗс пулса тӑнине ӑнлантарса пама кирли çинчен агитаторсен, совет влаçӗн шухӑшӗсене халӑх патне çитерсе тӑраканскерсен, нихçан та манмалла мар.

М. И. Калинин вӑрçӑ пуринчен те нумай вӑй хурса ӗçлеме ыйтни çинчен калать. Çакӑ ӗнтӗ вӑл вӑрçӑ вӑхӑтӗнче государство умӗнчи законпа çирӗплетнӗ харпӑрхӑйӗн обязательствисене пурнӑçа кӗртсе пынипе кӑна çителӗксӗррине, вӑйсемпе майсем çитнӗ таран, çав обязательствӑсенчен ирттерсе, государствӑна мӗнпе май килнӗ, çавӑнпа пуринпе те пулӑшмалла: аш-какай, тырпул, утӑ, тирсем, çӑм тата ытти нумай тӗрлӗ япаласем планран ирттерсе панипе пулӑшмалла. Эпир мӗнчухлӗ ытларах вӑй хуратпӑр, тӑшмана та çавӑн чухлӗ хӑвӑртрах çапса аркататпӑр.

— Избачӑн кашни утӑмӗ, халӑха хавхалантарма пултаракан унӑн кашни сӑмахӗ фронта пулӑшас тӗллевпе пулса пымалла, — тет М. И. Калинин. — Избачсен ӗçӗ — йывӑр, анчах пархатарлӑ та кӑмӑллӑ ӗç. Çакӑ вӑл — чуншӑн тумалли ӗç. Вӑл хӑйӗн ӗçӗпе халӑха çутӑ кӳнине пӗлет. Эсӗ хӑвӑн ӗçӳпе халӑхӑн ӑс-тӑн тавра-курӑмне сарма пулӑшнине ӑнланса илнӗ пулсан, çакӑнтан кӑмӑллӑрах ӗç мӗн пулма пултарать-ха ӗнтӗ.

М. И. Калинин хӑйӗн сӑмахне вӗçлесе çапла калать:

— Çакӑ питех те кирлӗ культурӑллӑ çутӗçре сире вӗçне çитиччен ӑнăçлӑн ӗçлеме ырӑ сунма ирӗк парсамӑр. Культурӑллӑ çутӗçе кулленех политикӑллӑ шухӑшсем кӗртсе пырӑр. Хальхи вӑхӑтра хӑвӑрӑн пӗтӗм тимлӗхе фронта пур енӗпе те, пур майсемпе те пулӑшса пырас ӗçе хывӑр. Çак линие культурӑллӑ работниксенчен, избачсенчен кам çителӗклӗн пурнӑçа кӗртсе пырӗ, вӑл политикӑллӑ питех те пысӑк ӗç тӑвӗ.

Канашлу çӗршыври мӗнпур политикӑллӑ çутӗç работникӗсене чӗнсе çыру йышӑннӑ.

Политикӑллӑ çутӗç работникӗсен Мускав облаçӗнчи канашлӑвӗн участникӗсем Совет Союзӗнчи мӗнпур политикӑллӑ çутӗç работникӗсене чӗнсе калани

Хаклӑ юлташсем!

Эпир Мускав облаçӗнчи ялти клубсен, вулав çурчӗсен, библиотекӑсен работникӗсем, облаçри канашлӑва пухӑннӑскерсем, сире, совет çӗршывӗнчи политикӑллӑ çутӗç работникӗсене, чӗнсе калатпӑр.

Пирӗн аслӑ совет халӑхӗпе унӑн паттӑр Хӗрлӗ Çарӗ этемлӗхӗн чи усал тӑшманне хирӗç—Германи фашизмне хирӗç 18-мӗш уйӑх ӗнтӗ отечественнӑй вӑрçӑ туса пыраççӗ.

Пирӗн тӑван çӗршывӑн талккӑшӗсене çӗмӗрсе кӗрсе, урса кайнӑ тӑшман халӑхсен мӗнпур культура вучахӗсене пӗр хӗрхенмесӗр пӗтере-пӗтере тӑкать. Мускав облаçӗн хӗвеланӑçӗнчи районӗсенче кӑна, иртнӗ çулхи кӗркунне фашистсен атти пырса пуснӑ çӗрте, нимӗçсем 926 шкула, 112 библиотекӑна, 296 вулав çуртне тата 6 музея ишӗлтернӗ.

Тискер тӑшман хӑйӗн умне Совет Союзне пӗтерсе тӑкас, пирӗн çӗршывӑн ирӗклӗхе юратакан халӑхӗсене чуралантарас, пирӗн культурӑна, искусствӑна, наукӑна тӗп тӑвас тӗллев лартнӑ. Анчах га çакӑ вӑл пулаймӗ! Совет халӑхӗн тата пирӗн союзниксен вӑйӗпе эпир фашистла тискер кайӑка çапса аркататпӑр!

Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци 25 çул тултарнӑ кун пирӗн çулпуç тата полководец Сталин юлташ çапла карӗ: «Хӗрлӗ Çар çӗнӗрен пыра-пыра çапнин вӑйне тӑшман туйса илес кун инçе мар. Пирӗн урамра та праздник пулать!», терӗ. Аслӑ Сталинӑн хавхаланулла çак сӑмахӗсем халӗ ӗнтӗ чӗрӗ пурнӑç пулса тӑчӗç. Пирӗн паттӑр войскӑсем Сталинград патӗнче тата Центральнӑй фронтра наступление куçрӗç. Хӗрлӗ полксемпе дивизисем, хӑватлӑ вӑй пулса, тӑшман çине тапӑнчӗç, вӗсем хӑйсен çулӗ çинче противникӑн чӗрӗ вӑйӗпе техникине çапа-çапа аркатса, пӗтерсе пыраççӗ.

Пирӗн, политикӑллӑ çутӗç работникӗсен, таса тивӗçӗ—хамӑрӑн пӗтӗм ӗçе çак тӗп задачӑна пурнӑçа кӗртес тӗллевпе туса пырасси пулать: «Йӑлтах фронт валли, йӑлтах тӑшмана çӗнтерес ӗç валли!» Тӑван çӗршыв умӗнчи пирӗн тивӗçлӗх—политикӑллӑ çутӗçӗн пур мајйӗсемпе те колхозниксен массисене ӗç тухӑçлӑхне ӳстерне çӗре, уйхирсенчи тырпул тухӑçлӑхне тата выльӑх-чӗрлӗхӗн продуктивноçне ӳстерне çӗре мобилизацилесси пулса тӑрать. Эпир халӑх хушшинче танксен колоннисене, авиаэскадрильйӑсене тума укçа-тенкӗ пухас ӗçӗн, Хӗрлӗ Çар боецӗсем валли парнесемпе ӑшӑ япаласем пухас ӗçӗн организаторӗсем пулса тӑма тивӗçлӗ. Пирӗн кашнин хисеплӗ ӗçӗ—фронтовиксен çемьисемшӗн тимлӗн тӑрӑшасси, вӗсене татах та ытларах пулӑшасси пулса тӑрать.

Мӗнпур политикӑллӑ çутӗç учрежденийӗсен ӗçне татӑклӑн лайӑхлатассине эпир хамӑрӑн тивӗçлӗх тесе шутлатпӑр. Хамӑрӑн ӗçе пирӗн клубсем, вулав çурчӗсем, культура çурчӗсем, библиотекӑсемпе музейсем валли ӑнăçлӑн ӗçлеме условисем туса парассинчен тытӑнмалла. Вӗсене ӑшӑтмалла, юсаса йӗркелемелле, вӗсенче таса та çутӑ, кӗме кӑмӑллӑ пултӑр, колхозникпе колхозница кунта хаçатсем, кӗнекесем вулама, хӑйсене интереслентерекен ыйтусем çине ответсем илме, ялти руководительсемпе калаçса канашланма пултарччӑр.

Çакна мӗнле тумалла-ши тесе шухӑшласа ларакан политикӑллӑ çутӗç работникӗ начар работник пулса тӑрать. Ялти интеллигенцирен, чаплӑ колхозниксенчен анлӑ актива явăçтармасӑр, эпир хамӑрӑн задачӑсене татса пама пултараймастпӑр. Çавӑнпа та кашни вулав çурчӗн актива организацилемелле. Учительсем, врачсем, агрономсем, зоотехниксем, МТС-семпе совхозсен тата колхозсен руководителӗсем, комсомолецсем,—акӑ камсене явăçтармалла ӗнтӗ пирӗн политикӑллӑ çутӗçне.

Малалла пирӗн çакна пурнӑçа кӗртмелле: кашни вулав çуртӗнче халӑха тӑтӑшах политикӑллӑ информаци парса тӑрассине, хаçатсемпе журналсем вулассине, калаçусем, докладсем, лекцисем тата ыйтусемпе ответсен каçӗсем туса ирттерессине йӗркелемелле.

Библиотекӑсӑр, справкӑсем паракан сӗтелсӗр, хаçат витринисӗр, стена хаçачӗсӗр вулав çурт не чӑн-чӑн культура вучахӗ теме çук, вулав çурчӗсем ялта культура саракан вучахсем пулса тӑччӑр тесен, çавсем вулав çурчӗсенче пурте пулмалла.

Колхозниксене агротехникӑна вӗрентес ӗçе организацилесси те çавӑн пекех пирӗн тӳрӗ задача пулса тӑрать. Çавӑнпа та ӗнтӗ вулав çурчӗсенче агротехника кружокӗсем тумалла, вӗсене вӗренмелли пособисемпе квалификацилле руководительсем çителӗклӗ таран уйӑрса памалла.

Çавӑн пекех политикӑллӑ çутӗç работникӗсен вӑрçӑ ӗçӗн пропагандисчӗсем пулса та сахал мар ӗçлемелле. Эпир клубсемпе вулав çурчӗсенче çар ӗçне вӗренмелли кружоксем тата йӗлтӗрçӗсен командисем тума çар ӗçне вӗрентнӗ çӗре отечественнӑй вӑрçӑ участникӗсене анлӑн явăçтарма сӑмах паратпӑр.

Художествӑллӑ сӑмах халӑхсене мӗнле вӑйлӑн çӗкленине пиртен кашни ӑнланать, çак хӗçпӑшалпа пирӗн усӑ курмалла та ӗнтӗ. Кашни вулав çуртӗнче художествӑллӑ пултарулӑх кружокӗ тата илемлӗ литература вулакансен группи пулмалла. Çак ӗç валли пирӗн вӑйсем нумай. Учительсемпе аслӑрах классенче вӗренекенсене кӑна илер, вӗсем çак ӗçре пысӑк пулӑшу пама пултараççӗ. Çуркуннепе çуллахи тапхӑрта эпир художествӑллӑ пултарулӑх енӗпе ӗçлекенсен выступленийӗсене тӳрремӗнех хирти стансенче, бригадӑсенче, фермӑсенче организацилеме шутлатпӑр.

Кашни избач, библиотекарь хӑйӗн пуçарулӑхне кӑтартсан, халӑха политика тӗлӗшӗнчен çутта кӑларас ӗçре ытти нумай тӗрлӗ формӑсемпе майсем те тупать. Эпир, москвичсем, çӗршыври мӗнпур политикӑллӑ çутӗç работникӗсене çавӑн пек тума чӗнетпӗр те ӗнтӗ.

Вулав çурчӗсен, ялти библиотекӑсен, клубсен тата районсенчи культура çурчӗсен работникӗсем! Тӑшмана хӗсcе пынӑ çӗрте хамӑрӑн паттӑр Хӗрлӗ Çара тылра вӑйлӑнрах ӗçленипе пулӑшар! Ялти политикӑллӑ çутӗçне вӑйлатар, хамӑрӑн колхозсемпе совхозсене çуракине ӑнăçлӑн хатӗрленме, вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи вӑйлӑ тырпулсем туса илме пулӑшар! Çакӑ вӑл фронта чи лайӑх пулӑшу пани пулӗ.

ИРТНӖ УЙӐХРИ ХӐШПӖР ИТОГСЕМ

Челноков юлташ главнӑй инженер пулса тӑракан завод коллективӗ, Сталин юлташӑн сӑмахӗсемпе хавхаланса тата фронтри Хӗрлӗ воинсен çӗнтерӗвӗсем ытти ответлӑсе. иртнӗ уйӑхра пысӑк çӗкленӳпе ӗçлерӗ, продукци туса кӑлармалли уйӑхри плана 103 процента ядӑн тултарчӗ. Заводри цехсенчен, ноябрьти итогсем тӑрӑх, Плешановпа Гольдман юлташсен цехӗсем мала тухрӗç. Вӗсем, талӑкри графика пӑхӑнса ӗçлесе, уйӑхри заданисене срокчен тата ытлашшипех тултарчӗç. Ку цехсенче нормӑран тухӑçлӑрах ӗçлекенсен хисепӗ те палӑрмаллах ӳсрӗ.

Л. ШУНИКОВА.

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ çыхӑну работникӗсен республикӑри социализмлӑ ӑмӑртуне организацилесси çинчен сӳтсе-явнӑ. Совнарком çыхӑну работникӗсен чи лайӑх коллективне, социализмлӑ ӑмӑртура мала тухнӑскерне, пама куçса çӳрекен Хӗрлӗ ялав тунӑ тата çак ӑмӑртӑвӑн условийӗсене çирӗплетнӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ ялавне çыхӑну работникӗсен чи лайӑх коллективне ӑмӑртура мала тухнӑшӑн кашни уйӑхри итогсем тӑрӑх параççӗ.

Çыхӑну работникӗсен республикӑри социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн условийӗсем çакӑн пек:

I. ӖÇЕН ПӖТӖМЕШЛЕ КӐТАРТӐВӖСЕМ ЕНӖПЕ:

1. Тупӑшсен государство планне тултарни;
2. Хаçат-журнал сармалли тата укçа-тенкӗ пухмалли плана тултарни;
3. Капитальнӑй строительство планне тултарни;
4. Телефонпа радиофикаци абоненчӗсене йышлӑлатни;
5. Кадрсем хатӗрлени;
6. Хуласем хушшинчи çыхӑнӑвӑн, телефон линисен, радиофикацин тата районсем хушшинчи çыхӑнӑвӑн линейнӑй сооруженийӗсене юсани.

II. ӖÇЕН ПАХАЛӐХӖ ЕНӖПЕ:

Телеграф

Телеграммӑсене кая юлса парассине тата вырӑна кая юлса çитерессине пӗтерни.

Телефон

Абонент ыйтни çине телефон станцийӗ хӑвӑрт ответлени.

Радиофикаци

Радиоузел ӗççӗр тӑнине пӗтерни, радио тӑрӑх хыпарсем памалли вӑхӑтӑн графикне пурнӑçа кӗртни.

Почта

1. Çыхӑнӑвӑн ӗçӗ пирки жалобӑсем çукки;
2. Хаклӑ япаласене янӑ чух, вӗсене çухатнӑ тата вӑрланӑ тӗслӗхсем пулманни;
3. Почтӑна почтовой вагонсем, пароходсем çинчен улӑштарса илмесӗр тата трактсем тӑрӑх ӑсатмасӑр хӑварманни;
4. Республикӑсем тата районсем хушшинчи трактсем тӑрӑх почта çӳретмелли расписанине пӑсни пулманни;
5. Адресатсене хаçатсем тата çырусем çитерсе памалли графика тӗрӗс пурнӑçа кӗртни;
6. Çар служащисен çемьисене памалли пособисен перевочӗсене вӑхӑтра çитерсе пани.

III. МАССӐЛЛӐ ӖÇСЕМ ЕНӖПЕ:

1. Ударниксен, стахановецсен тата стахановла шкулсен хисепне ӳстерни;
2. Çыхӑну работникӗсем тепӗр специальноçе вӗренни;
3. Производствӑллӑ канашлусем, политикӑллӑ калаçусем тата лекцисем ирттерни;
4. Оборонӑллӑ ӗçе сарса яни: çар специальноçӗсене вӗренни, ПВХО, ГСО тата Ворошиловла тӗл перекенсен значокӗсене хатӗрлени.

Социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн итогӗсене кашни уйӑхрах 3-мӗш числаран кая юлмасӑр тӑваççӗ. Лайӑх ӗçлекен коллектива Совнаркомӑн куçса çӳрекен Хӗрлӗ ялавӗсӗр пуçне 1000 тенкӗрен пуçласа 3000 тенкӗ таран преми параççӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗ çыхӑнӑвӑн мӗнпур работникӗсене социализмлӑ ӑмӑртӑва сарса яма тата унӑн условийӗсене пӗтӗмпех пурнӑçласа пыма чӗнет.

ВЛКСМ Центральный Комитетӗнче, РСФСР Наркомпросӗпе СССР Наркомземӗнче

ВЛКСМ Центральный Комитечӗ, РСФСР Наркомпросӗ, СССР Наркомземӗ тата ССР Союзӗнчи Совхозсен Халӑх Комиссариачӗ шкул коллективӗсен ял-хуçалӑх ӗçӗнчи Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсене пӑхса тухса, Чӑваш республикинчи Кувакино районӗнчи Турдаковӑри тулли мар вӑтам шкула (директорӗ Тихонова юлташ) СССР Наркомземӗн иккӗмӗш премине памалла тунӑ.

Танксен колоннине тума

ШАХАСАН. Ӑвӑспӳрт Кипечри вӑтам шкулта вӗренекенсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 2 кун хушшинче виçӗ пин тенкӗ укçа пухрӗç. Укçа пухас ӗç сарӑлсах пырать.

М. ДИМИТРИЕВ.

Оборона фондне

ÇӖМӖРЛЕ. (Хамӑр корр.). Районри ӗççыннисем çӗршыв оборонин фондне хӑйсен перекетленӗ укçине парса тӑраççӗ. Кӑçал 10 уйӑх та 20 кун хушшинче вӗсем оборона фондне 599.170 тенкӗ хывнӑ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрçӑ пуçланнӑранпа районри ӗççыннисем оборона фондне 988 пин тенкӗне яхӑн хывнӑ. Кунсӑр пуçне вӗсем тырпул, аш-какай тата ытти хаклӑ япаласем чылай панӑ.

Колхозсемпе МТС-сене ялхуçалăх машинисене юсама пулăшар!

Канашри вагонсем юсакан заводри комсомолецсемпе çамрăксен çырăвĕ

Тăван çĕршыври колхозсемпе совхозсем тата машинно-тракторнăй станцисем, ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçленĕ май, çитес суракине хатĕрленме тытăнчĕç. Партипе правительство вĕсене акмалли çĕр лаптăкне пĕр вĕçĕмсĕр ÿстерсе çителĕклĕ таран тырпул, аш-какай, пахча-çимĕç, промышленность валли чĕртавар парса тăма хушаççĕ.

Çак пысăк та ответлă задачăна ăнăçлăн пурнăçласси, чи малтанах, çитес сураки валли ялхуçалăх машинисемпе инвентарьсене вăхăтра юсаса хатĕрленинчен килет. Тракторсемпе плугсене, сеялкăсемпе культиваторсене тата сÿресене тĕплĕн юсаса, вĕсене çуракинче пĕр чăрмавсăр, тухăçлăн ĕçлекен туса хатĕрлеме пултарсан, çурхи тырăсене хăвăрт та вăхăтра акăпăр, вăйлă тырпулăн никĕсне ăнăçлăн хывса хăварăпăр. Çакна тăваймасан, сураки вăраха тăсăлĕ, тырпул тухăçлăхĕ чакĕ.

Ялхуçалăх машинисене йĕркене кĕртме колхозлă ялсенче пысăк ресурссем пур. Ялсенчи комсомолецсем вăл ресурссемпе туллин усă курма тăрăшаççĕ. Çамрăк патриотсем ялхуçалăх машинисемпе инвентарьсене тирпейлĕн упрас, юрăхсăр машина пайĕсене пухса ĕçе ярас, ялхуçалăх машинисене юсама çĕнĕ мастерскойсем уçас, ремонт ĕçне пĕлекен çĕнĕ кадрсене хатĕрлес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеççĕ. Вĕсен ĕçĕ халĕ государствăллă пысăк вырăн йышăнса тăрать: вăл предприятисенчи çĕрпер станоксене ялхуçалăх машинисен пайĕсем тăвассинчен хăтарса, Хĕрлĕ Çар валли ĕçлеме май парать. Колхоз çамрăкĕсене ку ĕçре хуласенчи, фабрикăсемпе заводсенчи, чугунçул станцийĕсемпе паровоз деповĕсенчи, ремесленнăй училищĕсемпе ФЗО шкулĕсенчи çамрăксем пысăккăн пулăшма пултараççĕ тата вĕсем пулăшма тивĕçлĕ те. Промышленноçри çамрăк рабочисем колхозсене ялхуçалăх машинисене юсас тĕлĕшпе пулăшма пултарнине пирĕн иртнĕ çулхи опыт уççăн кăтартса парать. Пĕлтĕр эпир производствăна сиен кÿмесĕр хамăр вăйпа ялхуçалăх машинисем валли 10.000 ытла деталь тата инструментсем хатĕрлерĕмĕр, кĕске вăхăт хушшинчех колхозсене 200 плуг ытла тата сеялкăсем юсаса патăмăр. Суракипе уборка вăхăтĕнче ялхуçалăх артелĕсемпе МТС-сене ялхуçалăх машинисене юсама пулăшакан бригадăсем ятăмăр. Завод коллективĕ нумай пулмасть ырă хыпар пĕлчĕ: эпир пулăшнă колхозсем ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсене вăхăтра вĕçленĕ, государствăна планран иртерсе тырпул, аш-какай тата пахча-çимĕç чылай панă. Çак ĕçре, паллах, пирĕн тÿпе те пур. Халĕ эпир колхозлă яла пулăшассине татах вăйлатма шутларăмăр. Пирĕн комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем, завод цехсене, складсене, завод картишне тĕреслесе тухрĕç, унта завода кирлĕ мар, çав вăхăтрах ялхуçалăхĕнче питех те кирлĕ машина чаçĕсемпе инструментсене тупрĕç. Пирĕн квалификациллĕ рабочисем, вăл материалсемпе усă курса, ĕç хыççăн колхозсене плугсемпе сеялкăсем юсаса пама хапăл тусах килĕшрĕç, юрăхсăр чаçсене ремонтлама, ялхуçалăх машинисене юсас тĕлĕшпе ĕçлекен мастерскойсем валли специалистсем хатĕрleме пулчĕç.

Пирĕн заводра тĕрлĕрен детальсем, инструментсем тата тимĕр-тăмăр чылай пухăннă. Эпир халĕ комсомолецсемпе çамрăксенчен ятарласах ялхуçалăх машинисене юсас тĕлĕшпе ĕçлекен бригадăсем организацилерĕмĕр. Вăл бригадăсем ялхуçалăх машинисене юсама кирлĕ чаçсемпе инструментсем пухас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Трактор, плуг е сеялка валли мĕн юрăхлă—эпир вĕсене йăлтах кирлĕ çĕре ярăпăр. Кунсăр пуçне заводри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен вăйĕпе ĕç хыççăн Канаш районĕнчи колхозсемпе МТС валли 25.000 тенкĕлĕх çĕнĕрен машина пайĕсем туса паратпăр. Иртнĕ çулхи ĕç опычĕпе усă курса, эпир кăçал каллех Канашри МТС-а, «Красная Чувашия» тата «Хунав» колхозсене шефа илетпĕр. Тракторсем валли сложнăй детальсем туса хатĕрлетпĕр. Шефа илнĕ колхозсенчи ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене юсама ятарласа ремонтнăй бригадăсем уйăратпăр.

Колхозсемпе МТС-сенче халĕ ялхуçалăх машинисене юсас тĕлĕшпе ĕçлекен квалификациллĕ специалистсем сахал. Эпир çакна шута илсе, колхозсемпе МТС валли тимĕрçсем, токарьсемпе слесарьсем, сверловщиксемпе электросварщиксем 50 çын хатĕрлеме обязательство илтĕмĕр. Опытлă мастерсем хăйсен станокĕсене ĕç хыççăн колхоз çамрăкĕсене пара ççĕ, вĕсене çÿлте асăннă специальноçсене вĕренсе алла илме пулăшаççĕ, хăйсем тĕллĕн ĕçлеме вĕрентеççĕ. Колхозлă яла çитес суракине хатĕрленме ĕçпе пулăшассине эпир хамăрăн тивĕçлĕх тесе шутлатпăр. Пирĕншĕн ку йывăр ĕçех мар, анчах çав вăхăтрах халăх хуçалăхне пысăккăн пулăшни пулать. Тăван çĕршыври промышленноçпа чугунçул транспорчĕн предприятийĕсенчи мĕнпур комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем колхозсемпе МТС-сене ялхуçалăх машинисемпе тракторсене юсанă çĕрте хăйсем мĕнпе пулăшма пултарнине хуçалла шутласа пăхма тивĕç.

Канашри вагонсем юсакан заводри ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ И. КОВАЛЕНКО.

ВЛКСМ Комитечĕн членĕ РИТА РУТЕ,

Çамрăк рабочисем: И. ДЕМЬЯНКОВ, Н. ЮРАКОВ, А. ШУМСКИЙ, Н. СКРИПНИК, Х. ЗАИМУТДИНОВ.

Бригадăсен ĕçри ÿсĕмĕ

Сĕмĕрле комбинатĕнчи хăма суракан цехра юлашки вăхăтра уйрăм рабочисем кăна мар, бригадăсем сменăсен заданисене темиçе хут иртерсе тултараççĕ. 8 çынран тăракан А. Трифонов юлташ бригади ноябрĕн малтанхи кунĕсенче плана 140—150 процент тултарса ĕçленĕ пулсан, халĕ 2 хут иртерсе тултарать. Бригадăра пурте пекех çамрăк рабочисем, çапах вĕсем хушшинче нормăна тултарайманнисем çук.

Авăн çапса пĕтерессишĕн çине тăрса кĕрешмелле

ÇЕМĔРЛЕ, ноябрĕн 7-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Чылай колхозсем фронтри пек ĕçлемелли çирĕмкунлăхра хастарлă ĕçлерĕç. Авăна молотилкăсемпе тата тăпачăсемпе те çапассине организацилени ĕçе хăвăрт вĕçлеме май пачĕ. Çирĕмкунлăхра районри 34 колхозран 20-шĕ авăн çапса пĕтерчĕç.

Анчах уйрăм колхозсем авăн çапас ĕçе вăраха ячĕç. Çак ĕçре халĕ те кирлĕ хăвăртлăхсем çук. Декабрĕн 2-мĕшĕнче районри колхозсем пурĕ те 20 гектар çинчи тырра çеç çапнă. Декабрĕн 4-мĕшĕнче те ĕç çав-çавах çителĕклĕ таран хăвăрт пулса пыман. 6 сложнăй молотилка тата лаша вăйĕпе ĕçлекен 7 молотилка ĕçленĕ пулсан та, талăк хушшинче 46 гектар тыррине çеç çапнă.

Уйрăм колхозсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Егоркинăри «Большевик» колхозăн, Мăн Улхашри «Красноармеец» колхозăн руководителĕсем иртнĕ кунсенче молотилкăсем çук тесе авăн çапмасăр тăратчĕç. Халĕ ĕнтĕ молотилкăсем пур, анчах авăн çапас ĕçре çав-çавах улшăну çук. «Красноармеец» колхозăн итемĕсем çинче халĕ виçĕ сложнăй молотилка. Вĕсенчен икĕшĕ трактор вăйĕпе ĕçлеççĕ. Вăл молотилкăсемпе бригадăсем талăкра 20-шер гектар тыррине çапса пуçтарма пултараççĕ. Анчах колхоз правленийĕ енчен ĕçе организацилени çук. Çавăнпа декабрĕн 3-мĕшĕнче вăл молотилкăсемпе мĕнпурĕ те 3 гектар тыррине çеç çапнă. Молотилкăсем патĕнче ĕçлеме çынсене те кирлĕ таран кăларман тата молотилкисем те ыррăн ĕçлемеççĕ. Пĕр молотилки çур кун ĕçлесех ванса кайнă.

Декабрĕн 4-мĕшĕнче колхоз икĕ сложнăй молотилкăпа 2 гектар тыррине çеç çапнă. Çавăн пекех «Большевик» колхозра та авăн çапас ĕç япăх пулса пырать. МТС руководителĕсем авăн çапас ĕç çине юлашки вăхăтра пачах çавăрăнса пăхмаççĕ. Механиксем МТС бригадисем ĕçлекен колхозсене тухса курмаççĕ.

Ĕçе çитес кунсенче те çакăн пек туса пырсан, «Красноармеец», «Большевик» колхозсем тырпулсене тепĕр ик-виçĕ эрнесĕр те çапса пуçтараймаççĕ. Райçĕрĕç пайĕн тата МТС политотделĕн ку колхозсене халех пулăшмалла.

Х. ЛИСИН.

Куславкка районĕнче халех улшăну тумалла

Район авăн çапас тĕлĕшпе чăтма çук кая юлса пырать. Декабрĕн 2-мĕшĕ тĕлне авăн çапмалли плана мĕнпурĕ те 87,3 процент çеç пурнăçланă. 51 колхозран 18-шĕ çеç тырпулсене çапса пуçтарнă. Пĕр колхоз та клевер çапма пуçламан-ха. «Новый путь», Л. Каганович тата Ю. Каганович ячĕсемпе тăракан колхозсем вăрлăхлăх клевера уйран çулса кĕртмен. Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Григорьев юлташ ĕçре ответлăха туймасть.

— 17 гектар вăрлăхлăх клевер уйра юлни вăл каласса тăмалăх та çук, унсăрăнах ĕç нумай, — тет вăл.

Анчах мĕн тăвать-ха вăл? «Новый путь» колхозра вăл пулнă. Колхоз ялхуçалăхĕнчи пур ĕçсене те япăх организациленине хăй куçĕпе курнă. Анчах клевера çулма колхозниксене мобилизацилемен. Çавăн пекех райçĕрĕç пайĕн работникĕсем колхозсенче пулаççĕ, анчах ĕçе организацилесе лайăхлатни çук. Колхозсен активне мобилизацилемен.

Куславкка районĕнче кăçалхи çуракинче вăрлăхлăх тырă çителĕксĕр пулчĕ. Çакна асра тытса, районри партипе совет организацийĕсен, колхоз руководителĕсен вăрлăх фончĕсене уйăрса хурас ĕçе уйрăмах пысăк вырăна хурса туса пымалла. Анчах çакă ĕçре курăнмасть-ха. Вăрлăх фондне район пайĕнхи куна 60 процент таран çеç уйăрса хунă. Вĕсене сортласа тасатас ĕçе пуçăнман та.

Куславкка районĕн ялхуçалăхĕнчи ĕçсене тĕпренех çĕнетсе лайăхлатас пулать. Колхозсенче агитациллĕ-ăнлантарулă ĕçе вăйлатмалла, пĕтĕм вăя 1942 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçленĕ çĕре мобилизацилемелле.

Тырпула тăккаланăшăн тивĕçлипе айăпланă

ОКТЯБРЬСКОЕ. «Сталь» колхоз председателĕ Федоров юлташ ялхуçалăх ĕçĕсене кирлĕ пек ертсе пыманнипе пула кăçал колхозра ыраша улăмламасăр çапнă. Ĕç пахалăхĕшĕн бригадирсем те кĕрешмен. Çавăнпа тырă кĕлтесенче нумай юлнă. Тĕрĕслесе пăхнă хыççăн кунта кашни пилĕк кĕлтере 887 грамм тырă юлни палăрнă. Тырăллă кĕлтессене тепĕр хут çапса илес вырăнне, колхозниксене валеççе панă.

Хăйсен ĕçне çакăн пек япăх туса пынăшăн районри çĕрĕç пайĕ тăккаланса юлнă тырра Федоров юлташран тата бригадирсенчен шыраса илмелле тунă.

Районри чылай колхозсем тырпулсене хăвăртрах çапса пухассишĕн кĕрешме пăрахрĕç. Кивĕ Тутайкассинчи «Красный Октябрь» колхозра авăн çапма 60 çын çеç тухать. Ĕç йĕркине çирĕп туман, дисциплина япăх. Колхозăн авăн çапмалли тата 92 гектар юлнă. Çапла пулсан та, кунта тырпулсене хăвăртрах çапса пĕтерме тăрăшмаççĕ.

«Новый быт» колхозăн председателĕ Архипов юлташ райçĕрĕç пайне ултавлă сводкăсем тăратнă. «Колхоз авăн çапса пĕтерчĕ», тенĕ вăл, анчах итем çинчи ĕçсене куллен ертсе пыман, авăн çапас ĕçе организацилемен. Колхозăн çапмалли тырă тата 124 гектар юлнă. Çавăн пекех государствăна та тырă парса татман.

Авăн çапса пĕтерессишĕн вăйлăн тăрăшмалла. Ĕçе йĕркелесе пырассинчен пăрăнакан руководительсем пулмалла мар.

А. ИВАНОВ.

Фронтовиксен çырăвĕсем

Фронтран пирĕн пата куллен вуншар çыру килсе тăрать. Фронтовиксем çав çырусенче хăйсен тата кĕрешÿри тусĕсен паттăр ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ, çакăнпа пĕрлех вĕсем орденлă Чăваш республикинчи ĕççыннисене фронта татах та вăйлăнрах пулăшса пыма чĕнеççĕ. Фронтовиксенчен хăшпĕрисем фашистла войскăсен тылĕнче пулса, унта хăйсен куçĕпе курнисем çинчен каласа параççĕ. Ирсĕр нимĕçсен пусмăрĕнче асапланакан пирĕн тăвансене хăвăртрах ирĕке кăларассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешме чĕнеççĕ. Куллен ÿссе, çирĕпленсе пырать фронтпа тыл хушшинчи çыхăну. Фронт—тыла, тыл—фронта хавхалантарать. Çапăçу хирĕнчен килнĕ çырусем пысăк мар, анчах вĕсем хĕрÿллĕ çулăмпа çунса тăраççĕ. Акă вĕсем:

1. ХАМ КУÇПА КУРНИ

Малтанхи йĕркерех сире, тăван халăха, фронтри чăваш боецĕсенчен хĕрÿллĕ салам!

Пирĕн аслă тăван çĕршыва тапăнса кĕнĕ сĕмсĕр те ирсĕр фашистсене хирĕç çапăçнă чухне нимĕç войскисем вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенче те пулма тÿрĕ килчĕ манăн. Этем сăнне çухатнă нимĕç йыттисем, нимĕнле вылькăхпа та танлаштарма çук ирсĕрсем тунă тискер ĕçсене эпĕ хам куçпа куртăм. Нимĕçсем хăйсем тытса илнĕ хуласемпе ялсенче, хуторсемпе местечкăсенче тĕрлĕ сутăнчăк çынсенчен бургомистрсем, старшинасем, старостăсем суйласа лартаççĕ. Çав сутăнчăксем вара нимĕç штыкĕ пулăшнипе хуласемпе ялсенче пирĕн çĕршывра тахçанах çапса аркатнă кивĕ строя—капиталистла строя туса хураççĕ. Колхозсене вĕсем хăйсен обозĕсенче тиесе килнĕ нимĕç помещикĕсен аллине параççĕ. Нимĕçсем киличчен пĕтĕм халăх пурлăхĕ пулса тăнă пуянлăхсене, тар юхтарса ĕçлесе тунă чаплă çуртйĕрсене, предприятисене «Германи государствин харпăрлăхĕ» тесе пĕлтереççĕ.

Эпĕ нимĕçсем тытса илнĕ М. ятлă ялта пулса куртăм. Унта 18 султан пуçласа 50 çула çитиччен арçынсене пурне те нимĕçсем хăйсен çарĕсем валли тĕрлĕ укрепленисем тунă çĕре мобилизациленĕ. Вĕсене мĕн ĕçлеттерни çинчен калама та хăрушă. Çав чурасенчен чылайĕшĕсем ĕçленĕ çĕртех пĕтеççĕ е вĕсене пĕр-пĕр ĕç туса пĕтернĕ хыççăн пере-пере пăрахаççĕ. Хĕрарăмсемпе ача-пăчасене те нимĕнле хĕрхенÿ те çук. Вăйпиттирех çамрăк хĕрарăмсене выльăхсемпе пĕрле таварнăй вагонсене хупса Германие ăсатаççĕ. Кĕскен каласан, нимĕçсем хăйсем тытса илнĕ районсенчи халăха вилĕм шăтăкĕ патне пырса тăратнă. Хăшпĕр çĕрте, 50—60 километр хушшинче, ялсем пулнă вырăнсенче хура кăмрăк куписем çеç вырташĕ.

Çав хăрушă пурнăçа тÿсес мар тесе кунти халăхсем нумайĕшĕсем —арçынхĕрарăмĕ, ачи-пăчи вăрмансене, партизана тухса каяççĕ. Вĕсем унта çĕр пÿртсем алтса пурăнаççĕ. Нимĕç вăрмана кĕме хăрать. Мĕншĕн тесен ăна унта партизан пульли кĕтет. Вăрмана пырас пулсан та, вĕсем пысăк отрядсемпе кăна пырса кĕреççĕ.

Нимĕçсем тытса илнĕ районсенче пулса курнă хыççăн манăн чĕрене нихăçан çухалми пĕр туйăм кĕрсе вырнаçрĕ: ирĕклĕ пурнăçпа пурăнса курнă пирĕн совет çыннисем тăшмана нихăçан та парăнас çук, нимĕç сыснисен чурисем пуличчен вĕсем вилме те хатĕр. Анчах вĕсем вилме шутламаççĕ, вĕсем сĕмсĕр захватчиксене пĕр çын юлмиччен вĕлерсе пĕтерессишĕн кĕрешеççĕ. Нимĕç хăй тытса илнĕ çĕр çинче каялла çавăрăнса пăхмасăр пĕр утăм та ярса пусаймасть. Вăл хăйĕн ĕнсине пуля пырса лекессинчен шикленет.

Тăван республикăри ĕççыннисем, ирсĕр нимĕç тытса илнĕ районсенче сирĕн тăвансем асапланаççĕ. Вĕсем сирĕнтен пулăшу кĕтеççĕ. Хăвăрăн тăвансене хăвăртрах ирĕке кăларассишĕн татах та ытларах вăй хурса ĕçлĕр, вăхăтлăха инкеке кĕрсе ÿкнĕ çав телейсĕр çынсене пулăшăр, вĕсемшĕн нимĕн те хĕрхенсе ан тăрăр, мĕн тума пултарнине пурне те тăвăр.

Боец И. А. УТРИВАНОВ.

2. ТĂВАН РЕСПУБЛИКĂРИ ĔÇÇЫННИСЕМ ТУНĂ БРОНЕПОЕЗД ÇИНЧЕ

Николай Орлов пирĕн республикăри ĕççыннисем тунă «Комсомол Чувашии» ятлă бронепоезд çинче çапăçать. Фронта кайиччен вăл Шăхасанти вăтам шкулта вĕреннĕ. Халь вăл пирĕн тăван çĕршыва нимĕç захватчикĕсенчен хÿтĕлесе хăварассишĕн кĕрешет. Нумаях пулмасть Орлов юлташран Шăхасанти вăтам шкулти учительсемпе вĕренекенсем патне радио тăрăх хыпар килчĕ.

— Хаклă юлташсем, эпĕ хамăн аттепе тата икĕ пиччепе пĕрле ирсĕр фашистсене хирĕç çапăçатăп. Юратнă учительсем, эсир ачасене паха пĕлÿ парассишĕн, ачасем, эсир лайăх вĕренессишĕн тăрăшăр. Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшăр,—тесе вĕçлерĕ Орлов хăйĕн çырăвне.

Çак çырăва итленĕ хыççăн учительсемпе вĕренекенсем хăйсем çине тивĕçлĕ обязательствăсем илсе, Орлов юлташ патне çыру çырса ячĕç.

А. МИХАЙЛОВ.

3. КОМАНДИР ÇЫРĂВĔ

Эпĕ госпитальре Элĕк районĕнчи Мăн Тукташ ялсоветне кĕрекен «Новый ключ» колхозра çитĕннĕ Василий Кондратьева тĕл пултăм. Ун патне, пĕррехинче, апат хыççăн çыру илсе килсе пачĕç. Эпир ăна иксĕмĕр пĕрле вуласа тухрăмăр. Çырăва фронтран Кондратьев тăнă ротăн командирĕ çырать. Çырура çапла каланă:

«Манăн ротăри юратнă паттăр сержант Вася, çырăвăн малтанхи йĕркинчех Сире эпĕ çапăçури хастар ĕçсемшĕн пысăк тав тăватăп. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿре паттăр пулнăшăн Сире пирĕн командовани орден пама ыйтса Верховный Совет Президиумне хут ячĕ. Манăн ротăра эсир чи паттăр командирччĕ, çывăх тусчĕ. Вася, эпĕ Сирĕн çапăçури хастарлăхран тĕлĕнеттĕмччĕ. Августăн 2-мĕшĕнче пирĕн çине фашистсен 9 танкĕ тапăнса килнĕ чухне эсĕ пĕр танкне граната пăрахса тĕппипех пĕтертĕн. Сана кура ытти боецсем те хастаррăн çапăçрĕç. Фашистсен броньăлăнă машинисем винтовкăсемпе тата гранатăсемпе кăна хĕçпăшалланнă боецсене хирĕç çапăçма пултараймарĕç. Нимĕçсен çĕмĕрĕлмесĕр юлнă танкĕсем хăвăртрах тарма пăхрĕç. Юратнă Вася, халĕ ĕнтĕ манăн ротăра Сирĕн пек паттăр командирсем татах та ÿссе çитĕнчĕç. Эпир малалла тапăнса пыратпăр, совет çыннисене фашистла оккупантсен пусмăрĕнчен хăтаратпăр.

Сире эпĕ хăвăртрах сывалса строя таврăнма ырă сунатăп. Боевой салампа рота командирĕ ЯКОВЛЕВ»

Ку çырăва вуласан эпĕ чăтаймарăм, тăван республикăна çырса пĕлтерес терĕм. Василий Кондратьевăн паттăр ĕçĕсем çинчен унăн килĕнчи аппĕ-амăшĕ, мĕнпур тăванĕсем, пĕтĕм республикăри ĕççыннисем пĕлччĕр. Маттур пирĕн тăван халăхĕн ывăлĕсем, тетчĕр!

Сержант П. ПОТАПОВ.

Ют çĕршывсенче

Черчилль Братфордра сăмах тухса каланă

ЛОНДОН, декабрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англи премьер-министрĕ Черчилль Англин çурçĕр-хĕвелтухăçĕнчи предприятисенче пулнă. Брадфордра вăл муниципалитет çурчĕ патне пухăннă йышлă аудитори умĕнче сăмах тухса каланă. Черчилль çапла каланă: ноябрьте пулнă событисем манăн кăмăла кайрĕç. «Ку вăл çакăн пек уйăх пулса тăчĕ: пирĕн салтаксемпе матроссем тата летчиксем ун чухне çĕнтерсе пычĕç, пирĕн хастарлă союзниксем — вырăссем пирĕн пĕрлехи тăшмана татăклăн пыра-пыра çапрĕç, Лăпкă океан çинче пирĕн Америкăри союзниксем тата Австралипе Çĕнĕ Зеландири тăвансемпе пĕлĕшсем хăйсем тăрăшни чылай ăнăçуллă пулнине курчĕç».

«Çак уйăх хушшинче, — тенĕ малалла Черчилль, — англичансемпе американецсем нумай хут çапăçнă уйăхра, эпĕ савăнса пурăнтăм, эпĕ çакăн пирки савăнтăм: эпир ĕнтĕ противник патнех çывăхартăмăр тата эпир халь этем тÿсейми пысăк йывăрлăха вырăссене пĕр хăйсене çеç тÿстерттерместпĕр, вырăссем çак султалăк хушшинче тата иртнĕ султалăкăн пысăк пайĕнче те çав питех те йывăр çапăçăва хăйсем туса пычĕç. Эпир пурте пĕр япалана — çĕршывран хаклăрах тес мар пÿль, анчах та унтан аслăрах япалана — ирĕклĕхпе тĕрĕслĕх ĕçне, вăйсăррин вăйлинчен сыхланас ĕçне, закона — пусмăрлăхран, ырă кăмăлпа чăтăмлăха — тискерлĕхсемпе хаяр тиранирен хÿтĕлетпĕр».

Çурçĕр-Африкăри кампани çинче чарăнса тăрса, Черчилль çапла каланă: «Эпир Çурçĕр Африкăна Америкăри союзниксемпе пĕрле пырса кĕтĕмĕр, эпир кĕске вăхăтра Атлантика океанĕ çыранĕнчен пуçласа Вăтаçĕр тинĕсĕн баррине çитрĕмĕр, пĕр 900 миля кайрăмăр. Анчах та пирĕн тата 20 миля каймалла. Çав кĕске çула кайса тухиччен тата противникăн хаярлăхĕпе çар хăватне персе хуçса ăна тинĕселле хăваласа яриччен питĕ йывăр çапăçусем пулаççĕ-ха. Эпĕ вăл çапăçусен результачĕсем пирки иккĕленместĕп, анчах та сирĕн вăл результатсене çăмăллăн çĕнтерсе илме пулать тесе шутламалла мар. Тепĕр енчен, Çурçĕр Африкăра пирĕн войскăсем пиншер çынна тыткăна илсе тата тăшмана хăваласа пырса малалла кусса пыраççĕ, анчах кунта та малашне йывăр çапăçусем пуласса кĕтсе тăмалла».

Черчилль çакна асăрхаттарнă: «Сыхă тăмалла тата пирĕн хальхи ăнăçу малашне противника тата вăйлăрах пыра-пыра çапма пулăштăр тесе тăрăшмалла», тенĕ. Черчилль çапла каланă: противник вăйлă-ха. «Противниксен темиçе миллион çын пур, нумай чухне вĕсем çав çынсемпе тарçăсем вырăнне усă кураççĕ. Вĕсен хăйсем тытса илнĕ пуян çĕрсем пур, вĕсем аслă та пултарулă халăхсене хăйсен урипе таптаса тăраççĕ. Вĕсен хăйсен нацистла принципĕ пур, вăл принцип — тирани, пĕр раса пуç пулса тăрасси, пĕр çынна, начар çынна, анчах та ун хыççăн пыракан ăссăр та пăсăлса кайнă çынсем турă пекех сÿлĕ хурса хисеплекен çынна намăса пĕлмесĕр пуç çапса тăрасси пулать.

Противника çĕнтереймесен те, ăна халран яма пирĕн вăйсем çителĕклĕ, тесе шутланă пирĕн тăшмансем. Вĕсем халĕ вăрçа вăраха тăсма шутлаççĕ, вĕсем союзниксем хушшинче хирĕçÿсем тухма пултарĕç, демократиллĕ çĕршывсем (вĕсене нацистсем кураймаççĕ тата вĕсен вăйĕсене çителĕклĕ хак памаççĕ) вăрçă пирки ывăнса çитме пултарĕç тесе шанса кĕтсе тăраççĕ. Çавăн пек ĕнтĕ вĕсен шанчăкĕ. Эпĕ сире кунта, Брадфордра, 30 çул [illegible]лла çак хулара хам каланă сăмаха тепĕр хут калатăп: атьăр пĕрле малалла каяр та çакна пурнăçра тĕрĕслесе пăхар, тетĕп».

Черчилль çапăçу хăйĕн чи çивĕч самантне пырса çитни çинчен каланă. «Эпир, — тенĕ вăл, — нацистсен тĕп вăйĕсем хирĕç тăракан тата усал ĕçсем тăвакан тĕле пырса çитмен-ха. Пирĕн мĕнпур вăя пухмалла, çил кĕтмен çĕртен майлă вĕрсен — эпир питĕ хаваслан ăпăр, анчах та пирĕн çапла пуласса шанса тăмалла мар», тенĕ.

Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри войскисен главнăй штабĕн коммюникинче çапла каланă: ĕнер Тебурда районĕнче хаяр çапăçусем малалла пулса пынă. Противник танксем тата пикировка тăвакан бомбардировщиксем пулăшса тăнипе пехотăн вăйĕсемпе атака тунă. Тебурда тĕлĕнче тĕп вырăн йышăнса тăракан высотасем çинче Англи войскисем хăйсен речĕсене пухса йĕркеленĕ. Противникăн пехотипе танкĕсен хăшпĕр вăйĕсем Тебурда патне татса кĕнĕ.

Тепĕр пĕлтерÿре çапла каланă: противник союзниксен питех те кирлĕ коммюникацийĕсене татма пултарайман пулин те, вăл Джебейдăна йышăнса илнĕ. Рейтер агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, союзниксем Джебейдăна çĕнĕрен атакăлас шутпа çав районра танксемпе артиллерие пухса пыраççĕ. Фронтăн ытти участокĕсенче Андерсон генералăн войскисем хăйсен позицийĕсене çирĕплетеççĕ.

ТУНИС РАЙОНĔНЧИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Матера секторĕнче, Бизертăран кăнтăрхĕвеланăçнерех 22 мильăра, хаяр çапăçусем пыраççĕ. Союзниксен вăйĕсем Джебейдăран хĕвеланăçнерехри районa, Тунисран çурçĕр-хĕвеланăçнерех 15 мильăра, контрольлесе тăраççĕ. Тебурда секторĕнче, Тунисран хĕвеланăçнерех 20 мильăра, тăшман хăй иккĕмĕш хут контрнаступлени тунă чухне çапăçăва 50 танка ярса кĕртсе янă. Тăшманăн нумай танкĕсене пĕтерсе тăкнă е вăйлăн сиенленĕ. Союзниксен самолечĕсем Бизертăна, Габеса тата Туниса малалла атакăлаççĕ. Хĕвелтухăç Алжирти Бон портне тăшманăн самолечĕсем темисе хутчен пыра-пыра тапăннă.

АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ НЕАПОЛЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, декабрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕн коммюникинче çапла каланă: декабрĕн 4-мĕшĕнче Америкăн 24 йывăр бомбардировщикĕ Неаполе тапăннă. Çакă вăл Америка авиацийĕ Италие малтанхи хут тапăнни пулать. Шултăра калибрлă бомбăсем суднăсем çине, гаване тата чугунçул çинчи сооруженисем çине пăрахнă. Противникăн авиацийĕ хирĕç тăман.

НИМĔÇСЕМ БРЕННЕР ÇУЛНЕ ÇИРĔПЛЕТЕÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Оверсис ньюс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Гитлер Бреннер çулĕ çинче тата Юрски Альпăра вăйлă укрепленисем тума приказ панă.

Софире вăрçăллă положени туса хунă

ЛОНДОН, декабрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: паян ирхине Софире вăрçăллă положени туса хуни çинчен пĕлтернĕ. Хулара пурăнакан çынсене хăйсен çурчĕсенчен тухса кайма чарнă. Приказра: «Хулари мĕнпур гражданла пурнăç чарăнса лармалла», тенĕ. Влаçсем çакнашкал ăнсăртран килсе тухнă мероприятие çапла ăнлантарса пама хăтланаççĕ: полицин «шанчăксăр элементсене» тытас шутпа массăллă ухтару туса иртермелле, теççĕ. Учреждени семпе магазинсене пурне те хупнă. Хулара çÿресси тата телефон çыхăнăвĕ чарăнса ларнă. Урамсенче войскăсем патрульре çÿреççĕ.

СОВЕТ СОЮЗНЕ ХИРĔÇЛЕ ВЫСТАВКА ОРГАНИЗАЦИЛЕНИНЕ СОФИРЕ ПУРĂНАКАН ХАЛĂХ ПРОТЕСТЛЕТ

ЖЕНЕВА, декабрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Софирен илнĕ хыпарсем тăрăх, октябрь уйăхĕнче Софире Совет Союзне хирĕçле выставка организацилениe хирĕç Софи хулинче пурăнакан халăх хăй протестленине пур тĕрлĕ майсемпе те кăтартса панă. Выставка çурчĕн кантăкĕсене çĕмĕрсе пĕтернĕ, стенасем çинче Германие хирĕçле çырнă çырусем пулнă. Болгари полицийĕпе гестапо айăплисене тупма тăрăшни ахалех пĕтсе ларнă. Ĕç нимĕçсем выставкăна ремонт тумалла тесе вăхăтлăха хупасси патнех çитсе тăнă.

КĔСКЕН

Чили президенчĕ Рузвельта телеграмма янă. Унта вăл çапла калать: Чили питĕ кирлĕ çар материалĕсем тăвассине ÿстерсе тата Германи пропагандипе шпионажне пĕтерсе Пĕрлешÿллĕ Штатсене Франци территорине ирĕке кăларма пулăшĕ, тет.

* * *

Канада карапĕ США шывĕсенче кĕрешсе çÿренĕ подводнăй лодкăна путарнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чуваш. Контора Главкинопрокат

Выпускает на экраны республики новый звуковой американский фильм

Музыкальную комедию

„ТРИ МУШКЕТЕРА"

По роману — Александра Дюма,
Режиссер — Аллан Дуэн,
Музыка — Самуила Покрасс,
Стихи — Гальтера Буллок.

ДЕЙСТВУЮЩИЕ ЛИЦА:

Д-Артаньян — Дон Амиге,
Три лакея — Братья Риц,
Атос — Дуглас Думбрил,
Арамис — Джон Кинг,
Портос — Руссел Гикс.

Производство „ФОКС 20-го столетия".

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1122 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 п.